Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен,
информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви

Чăваш Республикин Наци библиотеки

# ЧĂВАШ КУЛЬТУРИН ПАТРИАРХĔ

(И. Я. Яковлев çуралнăранпа
160 çул çитнĕ май)

Шупашкар
2007

УДК 37.015
ББК74.03 (2РОС.Чув)5-218.8Яковлев И.Я.
Ч 12

Кăларăмшăн яваплă: Г. П. Соловьева,
Чăваш Республикин Наци библиотекин
чăваш наци литературипе библиографии пайĕн пуçлăхĕ

Чăваш культурин патриархĕ : (И. Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнĕ май) / хатĕрлекенĕсем Т. Фадеева, А. Павлова. – Шупашкар, 2007. – 26 с.

©Чăваш Республикин Наци библиотеки, 2007

## ТУПМАЛЛИ


**«Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук»**
(Аслă классенче вĕренекенсемпе irттермелли
вăйă сценарийĕ) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Чăваш халăхне çутта кăларассишĕн кĕрешнĕ çын**
(И.Я.Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнĕ май
уява irттернĕ чух усă курма) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13




## «ТĂВАН ЧĔЛХЕСĔР ЧĂН-ЧĂН ПĔЛӲ ÇУК»

*(Аслă классенче вĕренекенсемпе irттермелли вăйă сценарийĕ)*

Кăçалхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче, пирĕн аслă вĕрентекенĕмĕр И. Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитет. Çавна май эпир сире унăн пурнăçĕпе пултрулăхĕ тăрăх йĕркеленĕ вăйă сценарийĕ сĕнетпĕр. Вăййа хутшăнакансен çав темăна лайăх пĕлмелле пулать. Вăйă йĕркине телевизорпа кăтартакан «Умники и умницы» передачăна тĕпе хурса йĕркеленĕ.

Вăйă тăватă туртан тăрать. Ăна irттерме тĕрлĕ хатĕрсем кирлĕ: виçĕ тĕслĕ çул: 2 хĕрлĕ, 3 сарă, 4 симĕс тăваткăлсем (30х30), 36 жетон е медаль, пĕр пысăк ылтăн тĕслĕ фольгаран туса хатĕрленĕ медаль. Н. Овчинников картинисем. И. Яковлев памятникĕллĕ фотоӳкерчĕксем кăтартма тата ытти те.

**Ертсе пыракан**: Ырă кун пултăр, ачасем, курма килнисем тата хăнасем. Паян пирĕн библиотекăра (е шкулта) пысăк та чаплă уяв. Пирĕн пата уйрăмах пултаруллă ачасем пуçтараннă. Эпир вĕсен çиçĕмлĕ хăвăрт шухăшлавне, çивĕч ăс – тăнне курса тĕлĕнĕпĕр.

Иван Яковлевич Яковлев (1848–1930) – чăваш халăхне çутта кăларакан, чăваш ачисем валли шкул уçакан çын пулнă. Кăçалхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Иван Яковлевич çуралнăранпа 160 çул çитнине уявлаççĕ. Паянхи вăййа эпир çак юбилее халаллатпăр.

(Пĕр ача И. Я. Яковлева халалласа çырнă сăвă вуласа парать)

Чăваш çынни мĕскĕн ĕçчен
Хут-кăранташ мĕнне пĕлмен.
Irттернĕ хăйĕн кун-çулне
Хирти хура тăпра çинче.

Анчах чăвашăн чĕрине
Уç сывлăш кĕнĕ пĕринче.
Чăваш çынни – Кушкă ачи
Чĕр сывлăш кĕртнĕ ун пуçне.

Вăл уçнă ялсенче шкулсем:
Çутта тухайччăр чăвашсем.
Кăларнă хăй кĕнекесем,
Тĕрленĕ çĕнĕ хайлавсем.

Нумай шыв юхнă çырмара,
Анчах ман савнă çĕр шывра
Манмаççĕ Яковлев ятне,
Асра тытаççĕ халалне.

*Е. Школьникова «И. Я. Яковлев»*

## 1–МĔШ ТУР

**Ертсе пыракан:** Халĕ пĕрремĕш тура хутшăнакансемпе паллашма вăхăт çитрĕ. Пĕрремĕш номер... *(ача ятне, хушаматне, миçемĕш класра вĕреннине калать)*. Иккĕмĕш... . Виççĕмĕш....

Ачасем, сирĕн умăрта виçĕ тĕслĕ çул: хĕрли, сарри, симĕсси. Хĕрлĕ çул çинче йăнăшма юрамасть, сарри çинче пĕр хут, симĕсси çинче икĕ хут йăнăшсан та вăйă малалла тăсăлать. Тархасшăн, хăвăр валли çулсем суйласа илĕр. *(Ачасем хăйсем валли çулсем суйласа илеççĕ).*

Ачасем, халĕ ĕнтĕ вăййа пуçлама вăхăт. Сире пурне те ăнăçу сунатпăр! *(Вăйă пуçламăшĕнче кĕвĕ яма юрать).*

Тĕслĕхрен: Прокофьев С. Детская музыка: Тарантелла // Фортепианная музыка для детей.

***Хĕрлĕ çул çинче тăракан ача валли хатĕрленĕ ыйтусем:***

1. Наци библиотеки умĕнчи палăка 1970-мĕш çулхи июнĕн 25-мĕшĕнче И. Я. Яковлев 120 çул тултарнине халалласа лартнă. Авторĕсем Мускав художникĕсем. Камсем?

*[Д. И. Народицкий – скульптор, Г. Е. Саевич – архитектор]*

2. Хусанти университетра вĕреннĕ хушăра И. Я. Яковлев мĕнле паллă ĕçсем тунă?

*[Чăваш алфавитне тунă;букварь пичетлесе кăларнă].*



рамова // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2003. – № 2. – С. 58-63.

Матвеев, Г. М. Роль И. Я. Яковлева в возрождении национального самосознания чувашей / Г. М. Матвеев, П. В. Кузнецов // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2007. – № 6. – С. 33-35.

Егоров, Д. Е. И. Я. Яковлев – основоположник и классик педагогической науки в Чувашии // Егоров, Д. Е. История чувашской школы и педагогики в событиях и лицах / Д. Е. Егоров. – Чебоксары, 1998. – С. 46-50.

Кузнецова, Л. В. Традиции школы И. Я. Яковлева в художественном воспитании / Л. В. Кузнецова // Дело его жизни : сб. ст. – Чебоксары, 2003. – С. 67-77.

Максимова, О. Г. Вклад Яковлева в становление системы повышения квалификации учителей / О. Г. Максимова, М. В. Максимова // Дело его жизни : сб. ст. – Чебоксары, 2003. – С. 98-104.

Овчинникова, К. П. Культурная среда как фактор духовнонравственого развития личности : [о пед. системе И. Я. Яковлева] / К. П. Овчинникова // Слово = Сăмах. – 2005. – № 2. – С. 24-28.

Петров, О. А. Исторический опыт трудового воспитания в яковлевской школе / О. А. Петров, В. А. Максимова // Яковлевские чтения : сб. науч. тр. – Чебоксары, 2005. – С. 97-103.

Плечов, Г. Н. Цели и формы историко-педагогического исследования творческого наследия И. Я. Яковлева / Г. Н. Плечов // Халăх шкулĕ = Нар. шк. – 2000. – № 4. – С. 17-21. – Библиогр.: 12 назв.

Хатĕрлекенĕ А. Павлова

Яковлев Иван Яковлевич // Чăваш чĕлхи тĕпчевçисем : биобиблиографии указателĕ / Чăваш Республикин Наци библиотеки. – Шупашкар, 2006. – С. 227.

* * *

Александров, Г. А. Яковлев Иван Яковлевич // Александров, Г. А. Чуваши в дореволюционных учебных заведениях / Г. А. Александров, Ю. П. Смирнов. – Чебоксары, 1994. – С. 34-35.

Александров, Г. А. И. Я. Яковлев на допросах в Симбирской ЧК и особом отделе Восточного фронта / Г. А. Александров // Из истории Чувашии советского периода : сб. ст. – Чебоксары, 1991. – С. 20-38.

Арсентьев, О. Чувашское просвещение до И. Я. Яковлева : [есть упоминание об И. Я. Яковлеве] / О. Арсентьев // Ялав. – 1998. – № 2. – С. 73-76.

Артемьев, Ю. М. Перечитывая Яковлева // Артемьев, Ю. М. Страсть к полемике : ст., рец. / Ю. М. Артемьев. – Чебоксары, 2003. – С. 36-53.

Афанасьев, П. В. Яковлев Иван Яковлевич (1848-1930) // Афанасьев, П. В. Писатели Чувашии : биобиблиогр. справ. / П. В. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 541-543. – Библиогр.: с. 542-543 (21 назв.).

Более полувека на ниве народного просвещения / сост. Н. Г. Краснов // И. Я. Яковлев в фотографиях и документах : [фотоальбом : посвящ. 150-летию чуваш. просветителя]. – Чебоксары, 1999. – С. 128-144.

Данилов, В. Д. Иван Яковлевич Яковлев // Данилов, В. Д. История и культура Чувашской Республики : (с древнейших времен до начала двадцатого века) : учеб. пособие : [в 2 ч.] / В. Д. Данилов, Б. И. Павлов. – Чебоксары, 1996. – Ч. 1. – С. 77-79.

Иван Яковлевич Яковлев // Страна Чувашия = Чăваш çĕршывĕ = Chuvash country : [кн.-альбом]. – Чебоксары, 2004. – С. 12.

Иван Яковлевич Яковлев (1848-1930). Патриарх // Выдающиеся люди Чувашии. – Чебоксары, 2002. – Т. 1. – С. 61-72 : фот., ил.

Краснов, Н. Г. Историческая значимость и актуальность жизни и творчества И. Я. Яковлева для современности : [о просветителе чуваш. народа И. Я. Яковлеве] / Н. Г. Краснов, А. Г. Аб-



***Сарă çул суйланă ачасем валли хатĕрленĕ ыйтусем (Сарă ыйтусем):***

1. И. Я. Яковлевăн малтанхи вĕренекенĕ кам пулнă? *[Алексей Васильевич Рекеев]*. А. В. Рекеевпа Яковлев хушшинчи çыхăну.

*[Рекеевпа Яковлев иккĕшĕ те Кăнна Кушкинче 1848 çулта çуралнă, шкулта вĕрентекен пулса ĕçленĕ, пĕрле куçару ĕçне туса пынă]*

2. Чăвашсен мĕнле паллă драматургĕсем И. Я. Яковлев çинчен пьесăсем çырнă?

*[И. С. Максимов-Кошкинский «Тăвăл хыççăн тăвăл»; А. Чебанов «Чĕмпĕр чăвашĕ»; Н. Терентьев «Хумсем çырана çапаççĕ»]*

3. Çак тупмалли юмахăн тупсăмĕ И. Я. Яковлевăн мĕн ятлă калавĕн ячĕпе пĕр килет? «Çулла вăрманта чĕпĕ кăларать, ялтан çăмарта вăрласа кайса, чĕппине тăрантарать».

*[«Чакак»]*

***Симĕс çул суйланă ачасем валли хатĕрленĕ ыйтусем (Симĕс ыйтусем):***

1. И. Я. Яковлев ертсе пынипе мĕнле тĕн кĕнекисене чăвашла куçарса пичетлесе каларнă?

*[Çĕнĕ Сăмах. Кивĕ Сăмах. Хисеп кĕнеки. Аслă праçниксем. Кĕлĕсем. Мăн кун кĕллисем. Çÿлти Туррăмăрпа Турă Амăшĕн тĕп чиркÿ уявĕсем т. ыт. те.]*

2. И. Я. Яковлев 1921-мĕш çулта чăваш халăхĕ валли хăварнă халалта Раççее ĕненмелле, юратмалла тет. Халалта асăннă вырăс халăхĕн кăмăлне, илемне, чапне, аслăлăхне кам сăнарĕ урлă кăтартса панă?

*[Николай Иванович Ильминский]*

3. Яковлев çинчен çырнă «Хунавлăх хăрнисем» тата «Тăвăл умĕн» романсене мĕнле чăваш писателĕ çырнă?

*[Александр Спиридонович Артемьев]*

4. Тутар Республикинчи Кăнна-Кушкинче И. Я. Яковлева халалласа лартма хатĕрленĕ палăк проекчĕн авторне калăр.

*[Мускав скульпторĕ, пирĕн ентеш Алексей Майраслов]*

Вăййа хутшăнакан ачасем ыйтусем çине хуравлаймасан курма килнисенчен ыйтмалла. Кашни тĕрĕс хуравшăн пĕрер жетон памалла, нумайрах жетон пухнă ача 4-мĕш тура тухать.

## 2-МĔШ ТУР

Тура хутшăнакансемпе паллаштаратăр. Ачасем хăйсем валли тĕрлĕ тĕслĕ çулсем суйлаççĕ.

***Хĕрлĕ ыйтусем:***

1. Яковлева чăваш ачисене Чĕмпĕре пухса вĕрентме вырăс çыннисем пулăшнă. Камсем?

*[Отставкăри полковник Раевский, Глазов купса, И. Н. Ульянов педагог]*

2. Çак каларăша И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? «Ăна курасшăн ан çун, вăл часах ĕнсе çине килсе тиенĕ».

*[«Нуша»]*

***Сарă ыйтусем:***

1. Яковлев Чĕмпĕрте мĕнле вĕренӳ заведенийĕсенче вĕреннĕ?

*[Çĕр виçевçисен шкулĕнче, гимназире]*

2. Çак йĕркесене И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? «Вырăс, тутар, чăваш – пурте тăван».

*[«Пулă сĕрни»]*

3. И. Я. Яковлев чăваш ачисем валли çырнă букварĕн малтанхи кăларăмĕ хăçан пичетленсе тухнă?

*[1872 çулхи январь пуçламăшĕнче]*

***Симĕс ыйтусем:***

1. Çак тупмалли юмаха И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ: «Хăй хура уралла, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, куçĕсем siksе тухас пек, сăмси кукăр!» Тупсăмне калăр.

*[«Уçăлма тухнă шăши çури»] [Автан]*

2. Мĕнле вĕренӳ заведенине И. Я. Яковлев ылтăн медальпе пĕтернĕ?

*[Чĕмпĕрти арçынсен гимназине]*

3. И. Я. Яковлев калавĕнчен илнĕ «нумай пĕтĕ, сахал çитĕ, пĕрле пурăннине мĕн çитĕ» сăмахсен пĕлтерĕшĕ мĕнре?

*[«Эпĕ ӳкĕнни» калав, пĕлтерĕшне ачасем калаççĕ]*



музей ; сост. А. И. Соколов. – Чебоксары, [1998]. – 1 л. (слож. втрое) : ил.

Иван Яковлевич Яковлев : жизнь и деятельность просветителя чувашского народа / худож. П. Сизов ; текст. Н. Г. Краснова. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1986. – 64 с. : ил.

Кураков, Л. П. Прометей из чуваш : размышления о выполнении Завещания И. Я. Яковлева / Л. П. Кураков ; предисл. И. Я. Яковлева ; ред. Н. П. Герасимова. – 3-е изд., доп. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1999. – 132 с. : ил., портр. + прил. (С. 133-222).

### Статьясем

Васильева, В. Э. Унăн ячĕ нихăçăн та сӳнмĕ : (И. Я. Яковлевăн çуралнă кунне халалланă литературăпа музыка композицийĕ) / В. Э. Васильева, Г. Л. Васильев // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2007. – № 6. – С. 39-41.

Волков, Г. Н. Халăхăн улăпла паттăрĕ / Г. Н. Волков // Чăваш сăмахлăхĕ : VIII класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар, 1994. – С. 76-78.

Григорьев, И. Иртнĕ кун мухтавĕ – çутă пуласси : [И. Я. Яковлевăн 1875–1876-мĕш çулĕсенчи пурнăçĕ çинчен] / И. Григорьев // Ялав. – 1998. – № 2. – С. 112-114.

Иван Яковлев (1848-1930) // Чăваш сăмахлăхĕ : X класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. – Шупашкар, 1993. – I пай. – С. 287-288.

Иванова, Р. Аслă патриарх кун-çулĕн йĕрĕпе : [И. Я. Яковлев пурнăçĕпе паллаштармалли вăйă-çулçӳрев] / Р. Иванова // Халăх ăс-хакăлĕ. – 2001. – № 2 (5). – С. 11-13.

Морозова, Н. Çăлтăрлă сехет : [И. Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнтарса йĕркеленĕ вăйă сценарийĕ] / Н. Морозова // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 1997. – № 5-6. – С. 100-103.

Плечов, Г. «Ĕненĕр Раççее, юратăр ăна...» : [И. Я. Яковлев çуралнăранпа 140 çул çитнĕ май] / Г. Плечов, Н. Краснов // Тăван Атăл. – 1988. – № 4. – С. 37-40.

Плечов, Г. И. Я. Яковлевăн çĕнтерӳллĕ утăмĕ : (аслă просветитель чăвашсен пĕр пĕтĕм çутĕçне йĕркелесе пырас тĕлĕшпе кĕрешни çĕнĕ çирĕплетĕвĕсем) / Г. И. Плечов // Ялав. – 2002. – № 4. – С. 60-65.

И. Я. Яковлев чăваш халăхĕ хушшинче христианство тĕнне сарас тесе те нумай ĕçленĕ. Вăл 39 çул хушши турă кĕнекисене чăвашла куçарнă. Куçарнă кĕнекесем халăха ăнланмалла тата тексчĕсем тĕрĕс пулччăр тесе тăрăшнă. 1906 çулччен вăл Çĕнĕ заветăн 12 кĕнекине каларнă. Пĕтĕм тăкакне Православин миссионерла общества тӳснĕ.

– Иван Яковлевич Яковлев Екатерина Алексеевна Бобровниковăпа икĕ ывăлпа пĕр хĕр çитĕнтернĕ. И. Я. Яковлев ăрăвĕнчен культурăра тата искусствăра паллă çынсем тухнă. Вĕсенчен хăшĕ – пĕрине асăнса хăварас тетпĕр: СССР Наукăсен академийĕн членĕ, Патшалăх премийĕн лауреачĕ, профессор А. И. Яковлев, физикăпа математика наукисен докторĕ, Мускаври государство университечĕн тава тивĕçлĕ профессорĕ тата Чăваш патшалăх университечĕн хисеплĕ докторĕ И. А. Яковлев. искусствоведени докторĕ, профессор Е. А. Некрасова, филологи наукисен докторĕ, МГУ профессорĕ В. М. Толмачев, РФ тава тивĕçлĕ артистки, Патшалăх премийĕсен лауреачĕ. ГИТИС профессорĕ А. А. Некрасова, РФ тава тивĕçлĕ артистки ГИТИС профессорĕ А. Б. Покровская, искусствоведени кандидачĕ, РФ тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ Е. В. Павлова, РФ тава тивĕçлĕ артисчĕ В. В. Павлов тата ыттисем те.

Францире И. Я. Яковлев ăрăвĕнчен тухнă паллă çынсем чылай. Вĕсем хушшинче ученăйсем, юристсем, физиксем. Мăнукĕн ачи, медицина профессорĕ Франсуаза вара И. Я. Яковлев 150 çул тултарнă ятпа Мускавра йĕркелекен уява хутшăнма палăртать.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

### Кĕнекесем

Александров, Г. А. Иван Яковлевич Яковлев : фрагменты жизни / Г. А. Александров ; ред. А. К. Салмин. – Чебоксары : Чувашия, 1997. – 194 с.

Дело его жизни : сб. ст. [об И. Я. Яковлеве ] / Чебоксар. ин-т экономики и менеджмента СПб. гос. техн. ун-та, Фонд им. И. Я. Яковлева. – Чебоксары : Чувашия, 2003. – 237 с.

Иван Яковлевич Яковлев – патриарх чувашского просвещения : к 150-летию со дня рождения : [буклет] / Чуваш. нац.



4. И. Я. Яковлев произведенийĕсене мĕнле чăваш художникĕсем ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ?

*[М. А. Ильин, В. И. Агеев, Г. Д. Харлампьев; М. М. Михаэлис]*

## 3-МĔШ ТУР

***Хĕрлĕ ыйтусем:***

1.Çак йĕркесене И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? «Лаши çине утланчĕ, тет те, савăнса чуптара пачĕ, тет, килне».

*[«Лаша шырани»]*

2. Чăваш çырулăхне туса хунăранпа 100 çул çнтнĕ май «Центрнаучфильм» киностудире И. Я. Яковлева халалласа «Дело его жизни» илемлĕ фильм ӳкернĕ. Режиссерĕ кам?

*[Сценари авторĕ, режиссерĕ – В. М. Ломоносов ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕ Д. Э. Дубинский]*

***Сарă ыйтусем:***

1. Кам вăл Алексей Жиркевич? Яковлевпа Жиркевич ăçта тата хăçан паллашнă?

*[А. Жиркевич Латви республикинче подпоручик çемьинче çуралнă. 1915 çулта шăпа Алексея Чĕмпĕр хулине илсе килнĕ. Кунта вăл лазарет инспекторĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Пĕр лазаречĕ учительсем хатĕрлекен шкулта вырнаçнă. Çавăнта Яковлевпа Жиркевич паллашнă та. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем чи çывăх юлташсем пулса тăнă. Жиркевичăн «Встречи с Яковлевым» дневникне асăнма юрать]*

2. «Чĕмпĕр гимназисчĕ», «И. Я. Яковлев», «Ту айĕнче ларать мухтавлă Кушкă» сăвăсен авторĕ кам?

*[А. Алка]*

3. И. Я. Яковлев 28 çула яхăн чăваш шкулĕсене ертсе пынă. Çав вăхăтра чăваш ялĕсенче вăл тата ăна пулăшакансем сахал мар шкул уçнă. Мĕн чухлĕ шкул уçнă?

*[40 шкул патне]*

***Симĕс ыйтусем:***

1. И. Я. Яковлев хатĕрленĕ чăваш чĕлхи алфавитĕнче, юлашки вариантĕнче, миçе саспалли пулнă?

*[25 саспалли]*

2. Çак ваттисен сăмахне И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? "Ахаль тăриччен кĕрĕк аркине те пулин йăвала».

*[«Укçа уйăрни»]*

3. И. Я. Яковлев миçемĕш çулта, ăçта вилнĕ? Ăна ăçта пытарнă?

*[1930 çулта Мускавра вилнĕ. Ваганьково масарĕнче пытарнă]*

4. «Чĕмпĕр Прометейĕ» сăвăпа «Чĕмпĕр» поэма авторĕсем камсем?

*[«Чăваш Прометейĕ» – Ю. Вирьял, «Чĕмпĕр» – Я. Ухсай]*

Турсенче нумайрах жетон пухнă виçĕ ача суйласа илетпĕр. Çак ачасем финала тухаççĕ (хушамачĕ, ячĕ, миçемĕш класра вĕренни, пухнă жетонсен шучĕ).

Финалра выляма пуçличчен «Щелкунчик» юмахри кĕвве яма юрать (Щелкунчик: Музыкально-литературная композиция З. Чернышевой по музыке балета П. Чайковского и сказке Э. Т. А. Гофмана).

## 4-МĔШ ТУР

### Финал

***Хĕрлĕ ыйтусем:***

1. Çак сăмахсене И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? «Каласса пĕр тĕрлĕ калаççĕ те тăвасса урăх тĕрлĕ тăваççĕ...».

*[«Кашкăрпа карчăк»]*

2. Ульяновскра, ĕлĕкхи чăваш шкулĕ пулнă вырăнта, И. Я. Яковлев палăкĕ ларать. Палăк авторне калăр.

*[Мускав скульпторĕ, пирĕн ентеш – Алексей Майраслов]*

***Сарă ыйтусем:***

1. Чĕмпĕрти чăваш шкулне хăçан тата ăçта уçнă?

*[1868 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче Чĕмпĕр гимназийĕнчи 6-мĕш класра вĕренекен И. Я. Яковлев хăй пурăнакан хваттерĕнче Рекеева вĕрентме пуçланă. Çак кунтан пуçласа чăваш шкулĕ уçăлнă тесе йышăннă]*



нумайрах ырă ĕç тăвассишĕн тăрăшнă, нимĕскере те вăл вак ĕç тесе шутламан.

Иван Яковлевич хай те тăван халăх хушшинче нумай вăхăт ирттернĕ. Ялтан яла çӳренĕ чух вăл учительсен ĕçне тĕрĕсленипе çеç çырлахман, хресченсене пуçтарса ачасене хут вĕрентме кирли çинчен витĕмлĕ каласа панă, шкулсем уçма ӳкĕтленĕ.

И. Я. Яковлев чăваш халăхĕн шухăш-камăлне питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Итлесе пăхар-ха унăн халалласа çырнă хăшпĕр йĕркисене:

– «<...> Пĕр-пĕринпе сапăр пулăр, çукшăн-пуршăн чаш-кăрса çӳресрен, харкашасран аякка тăрăр <...> Чăваш хушшинче пĕр – пĕр килĕшӳсĕр ĕç час-часах пулкалать. Эпĕ çавна пĕрре анчах курман. Çапла акă чăвашран хăшĕ те пулин мала туха пуçласан ыттисем ăна такăнтарма пăхаççĕ, çулне пӳлеççĕ. Вара унăн та ырă ĕмĕчĕ таталать, çине пыракансем хăйсем те тип-типĕ тăрса юлаççĕ. Эсир апла ан пулăр. Çӳле çĕкленекене мĕн хал çитнĕ таран çĕклеме тăрăшăр. Хăпарса çитсе тĕрек илсен, вăл вара хăй сире аялтан çӳле турта-турта кăларĕ <...> Вĕренсе çутăлма телей тупнă чăвашсене калам тата. Ас туса тăрăр! Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир пулăшса пурăнмалла: вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар. Ан манăр! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас ĕç пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла... Вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха пуçтарса, эсир хăварăн тăван халăхăр патне таврăнăр, вара патшалăхра чăн лайăх этем мĕнле пулмалли çинчен тата халăх хушшинче пулмалли тӳрĕлĕх çинчен вĕрентĕр <...> Тăван халăхăрăн çуклăхĕнчен, начарлăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен ан вăтанăр, эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле <...>».

– И. Я. Яковлев халăха çутта кăларас ĕçе хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшипех хастар хутшăнать. Хăй ĕмĕрĕнче И. Я. Яковлев «Чăваш букварĕ» (30 ытла кăларăм). «Чăвашсене вырăсла вĕрентмелли пирвайхи вĕренӳ кĕнеки», «Букварь» хыççăн чăвашла вуламалли пĕрремĕш кĕнеке», ытти 17 кĕнекепе брошюра, педагогика, самана тата ытти политика ыйтăвĕсемпе, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен калакан 42 статьяпа документсем пичетлесе кăларнă.

безукоризненностью интонации, ровной, спокойной выдержкой и полной ответственностью».

Шел пулин те, ун чухне юрăсене çырса илме майĕ пулман. Эпир сире Ираида Вдовинан «Ирĕксĕр качча панă хĕр юррине» итлесе пăхма сĕнетпĕр (И. Вдовина юрри янăрать).

– Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнчи хорпа оркестран пуян та кăткăс репертуар пулнă. Унта вырăс тата ют çĕршыв композиторĕсем çырнă опера пайĕсем, оперăсем валли çырнă увертюрăсем тата ятарласа оркестр валли çырнă произведенисем кĕнĕ.

Шкулта виçĕ тĕслĕ оркестр ĕçленĕ: духовой, струнный тата симфониллĕ. Вĕренекенсем виçĕ тĕслĕ хорта юрланă: хĕрача, арçынача тата хутăш хорта.

1913 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче шкулта вĕренекенсен вăйĕпех опера лартнă. Тĕп партине выляса юрлакансем: К. Н. Эсливанова (сопрано), В. И. Дубровин (тенор), Ф. П. Павлов (баритон) пулнă. Дирижерсем: С. М. Максимов, юлашки пайĕнче Ф. П. Павлов. Художник-декораторĕ – К. В. Иванов.

Чăваш музыкин çĕнĕ историйĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен пуçланса пырать.

Оркестр репертуарĕнчи «Половецкие пляски» (А. Бородинăн «Князь Игорь» оперăран) итлесе пăхма пулать.

– Вырăс халăхне чĕререн юратнăсăр пуçне И. Я. Яковлев вырăс чĕлхине пысăк вырăна хунă. Вырăс чĕлхи Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тĕп предмет шутланнă. «Вырăс чĕлхи чăвашсене вырăс культурине вĕренсе пыма пулăшать», – тенĕ Иван Яковлевич. Шкултан вĕренсе тухнă тĕле чăваш ачисем пурте пекех вырăсла çырма, калаçма лайăх пĕлнĕ.

Итлесе пăхар-ха Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ А. Т. Варфоломеева асаилĕвне:

– «Пире вырăсла е чăвашла калаçнă чухне те хамăр сăмахаюмаха тĕрĕслесе тăма вĕрентнĕ. «Вырăс чĕлхи тăван чĕлхепе пĕрле, – тенĕ И. Я. Яковлев, – Вырăс чĕлхи урокĕсенче учительсем вĕрентекенсене вырăс культурине тата хамăрăн чăваш халăхне юратма – хисеплеме вĕрентмешкĕн тăрăшатчĕç. Вырăс чĕлхине вĕрентме ун чухнехи чи лайăх (К. Ушинский, Л. Толстой) кĕнекиеемпе усă куратчĕç».

– Чăвашсем Иван Яковлевич патне темĕнле ыйтупа та пырса çӳренĕ. Вăл вĕсене май килнĕ таран пулăшнă, халăхшăн



2. Пĕр вăхăт Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче «Нарспи» авторĕ К. В. Иванов учитель пулса ĕçленĕ. Вăл мĕнле предметсем вĕрентнĕ?

*[Ĕç, илемлĕ çыру, ӳкерӳ урокĕ]*

3. «И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев чăваш шкулĕнче» тата «И. Я. Яковлев II Микулай патша патĕнче» картинăсен авторĕ кам?

*[Николай Васильевич Овчинников]*

***Симĕс ыйтусем:***

1. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче мĕнле вĕренӳ пайĕсем пулнă?

*[1) учительсем хатĕрлекен шкул;*
*2) хĕр арăмсен педагогика курсĕ;*
*3) хĕр арăмсен икĕ класлă училищи;*
*4) ар çынсен икĕ класлă училищи]*

2. И. Я. Яковлев учитель пулса ĕçленĕ вăхăтра мĕнле предметсемпе вĕрентнĕ?

*[Логика, педагогика, математика]*

3. И. Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем вырăс писателĕсенчен камсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă?

*[К. Д. Ушинский, Л. Н. Толстой, И. А. Крылов, Н. А. Некрасов, А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, В. А. Жуковский тата ыттисен произведенийĕсене те]*

4. Çак йĕркесене И. Я. Яковлевăн мĕнле калавĕнчен илнĕ? «Как быть, Каринкке? Епле тăвас, Емелкке?»

*[«Утăра»]*

2 ача И. Я. Яковлев çинчен «**Çырулăх ашшĕ**» сăвва вулаççĕ:

Тăван çырулăх ашшĕне –
Яковлева асра тытатпăр.
Чăвашлăхшăн чун ăшшине
Хĕлхем чĕртсе, çутса хăварнă.

Саспаллипе çырулăха,
Пире ыр пил парса хăварнă.
Малашлăха малаллăха
Телейлĕ пурнăç халаллană.

Вăл уçнă Чĕмпĕрти шкулта
Чăваш çынни ăс мулĕ пухнă.
Вăл акнă вăрлăх пит шултра,
– Ăсчахĕсем çĕршерĕн тухнă.

Ивановпа Шупуççынни,
Тайăр Тимкки те Федор Павлов...
Вĕсем çунатланса çырни
Халь сумлă та мăнаçлă палăк.

*В. Круглов «Çыруллăх ашшĕ»*

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

### Кĕнекесем


Яковлев, И. Я. Ача-пăча калавĕсем = Детские рассказы / И. Я. Яковлев ; редакторĕ А. К. Шашкина ; художникĕ И. В. Алексеев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 2001. – 48 с. : ил.

Яковлев, И. Я. Утăра / И. Я. Яковлев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. – 24 с.

* * *

И. Я. Яковлев в фотографиях и документах : [фотоальбом : посвящ. 150-летию чуваш. просветителя] / авт.-сост. Н. Г. Краснов ; Чуваш. гос. ун-т им И. Н. Ульнова, Ин-т И. Я. Яковлева. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1999. – 221 с. : ил.

Краснов, Н. Г. Выдающийся чувашский педагог-просветитель / Н. Г. Краснов. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 1992. – 415с.


### Статьясем


Адюкова, О. Чĕмпĕр шкулĕн пĕлтерĕшĕ : [И. Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çинчен] / О. Адюкова // Тантăш. – 2005. – 19 çу (№ 20). – С. 12.

Александров, Г. И. Я. Яковлев юбилейĕ умĕн / Г. Александров, А. И. Троицкий // Хыпар. – 1997. – 2 утă.

Алексеева, В. Яковлев вĕрентĕвĕ вилĕмсĕр / В. Алексеева // Тантăш. – 1997. – 23 юпа. – С. 5.

Краснов, Н. Г. Аслă вĕрентекенĕмĕр / Н. Г. Краснов // Ялав. – 1988. – № 4. – С. 9.




Çитес çула çитсессĕн,
Пĕртак ăспуç кĕрсессĕн,
Ярăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма.
Турă хушсан, çын пулсан
Курăн Чĕмпĕр хулине.
Ĕнтĕ, ачам, самана
Ĕлĕкхи мар кучуне.
Ĕлĕкчĕ вăл, ĕлĕкчĕ,
Урăх тĕслĕ ĕмĕрччĕ...

*К. Иванов «Хальхи самана»*

– Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ чăваш халăхĕн революцичченхи культурин центрĕ пулнă. Вăл чăваш халăхĕшĕн университет, консерватори, институт вырăнне шутланса тăнă, вăл чăвашăн академийĕ пулнă. Кунта театрпа драматурги, музыкăпа сăнарлăх искусствисем чăмăртанаççĕ. Сăмах искусствин тĕрлĕ тĕсĕсем, жанрĕсем аталанаççĕ.

Шкулта музыка теорине, нотăпа юрлама, сальфеджио – мĕн кирлине пурне те вĕрентнĕ. Шкулти концертсенче вĕренекенсем хорпа та, пĕччен те тухса юрланă, оркестрпа та, соло та каласа панă. Çавăнпа Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсем музыка ĕçĕнче, юрлаттарас ĕçре хăшĕ-пĕри чылай çитĕнӳсем тунă. Вĕсем ялти шкулсене сарăлсан та çав ĕçе пăрахман. Кунсăр пуçне вĕсем тата халăх юррисене пухма тытăннă.

И. Я. Яковлев хăйĕн шкулĕнче вĕрентме талантлă педагогсене явăçтарма тăрашнă. 1906 çулта юрă ĕçне вĕрентме вăл Иван Митрофанович Дмитриева илет. Питĕрти Придворнăй капеллăран вĕренсе тухнăскер, Иван Митрофанович питĕ вĕреннĕ музыкант тата талантлă вĕрентекен пулнă. Вăл вĕрентнĕ вăхăтра Чĕмпĕр шкулĕнчи чăваш хорĕ юрланине итлеме вырăссем чăваш шкулне ятарласа çӳренĕ. Хор дворянсен, архирейсен, миссионерсен собранийĕсенче юрланă. Чăваш хорĕ юрлани çинчен Архив комиссийĕн журналĕнче çапла çырнă: «В отношении стройности исполнения чувашский хор заслуживает большой похвалы. Сольный номер «Плач невесты», исполненный воспитанницей А. Букаревой, был особенно удачен. Исполнительница обратила на себя внимание звучностью и красотой голоса,

И. Я. Яковлев ачаранах тăван халăхĕн йăли-йĕркине, шухăш-туйăмне лайăх пĕлсе ӳснĕ. Вăл тăван халăха, тăван чĕлхене хисеплеме, юратма вĕрентессишĕн тăрăшнă. Чăвашла манакансене вăл ырламан. Хăйĕн калавĕсенче халахăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕпе анлăн усă курнă. Вĕсенче пуринче те – авалхи юрă-сăвăран илнĕ сăмах çаврăнăшĕсем, ваттисен сăмахĕсем, каларăшĕсем. Акă вĕсенчен хăшĕ пĕрисем: «Шывăн турачĕ çук». «Нумая хапсăнсассăн нимĕнсĕрех тăрса юлнă», «Пырна пула пуçна çийĕн», «Туман тихан пилĕкне ан хуç», «Çăкăр-тăвар хире – хирĕç» тата ыттисем те. Ку сăмахсем калавсемпе юмахсен тĕп шухăшне уçса параççĕ, вĕсен педагогикăлла пĕлтерĕшне нумай вăйлатаççĕ. И. Я. Яковлев çамрăксене тăван халăха, тăван чĕлхене хисеплеме хушса хăварнă: «Тăван халăхăрăн çуклăхĕнчен, начарлăхĕнчен, вăл тĕттĕмре пурăннинчен ан вăтанăр, эсир вĕсен хушшинчен тухнă, ĕçлессе те вĕсемшĕн ĕçлемелле <...>».

Пулас чăваш писателĕсем хăйсен малтанхи утăмĕсене Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тăваççĕ.

– Вăл ăс парса çитĕнтернĕ сăвăçсен шутне чи малтан К. В. Ивановпа Н. В. Васильев-Шупуççынни кĕреççĕ. И. Я. Яковлев кулленех пулăшса тăнине пула Н. И. Иванов, Г. Т. Тимофеев, И. Н. Юркин, Г. А. Кореньков, М. Ф. Акимов, Ф. П. Павлов. М. Д. Трубина тата ыттисем те чăвашсен паллă писателĕсем тăраççĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнă тĕле К. В. Иванов «Хальхи самана» сăвă çырать.

– Ачаш кăна ачам пур,
Пĕртте хăпа пĕлмерĕ.
Апат çисе ларнă чух
Аран çилĕ килмерĕ.
«Çыру пĕлме, çын пулма
Ялти шкула яр-ха, – тет, –
Çыру пĕлни мĕн тума
Кирлĕ çынна, атте?» – тет.
– Ачам, ачам, ан йĕтет,
Илтес кунта ху илтĕн.
Хут вĕренни уссине,
Хут вĕренсен, ху пĕлен.



Морозова, Н. Çăлтăрлă сехет / Н. Морозова // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 1997. – № 5 – 6. – С. 100-103.

Мукина, И. Яковлев – куçаруçă : 150 çул тултарнă май / И. Мукина // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 1997. – № 3. – С. 122-123.

Серегин, С. И. Я. Яковлев бюсчĕ / С. Серегин // Хыпар. – 1997. – 21 чӳк.

Филимонов, Д. Чăвашла кĕнекесем тухни çинчен / Д. Филимонов // Хыпар. – 1995. – 28 раштав.

Николаев, А. Чĕмпĕр шкулĕн юрă тĕслĕхĕ : [И. Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕр шкулĕнче вĕрентĕве ял хуçалăхĕпе çыхăнтарас тĕлĕшпе ĕçлени çинчен] / А. Николаев // Хыпар. – 2005. – 28 çĕртме. – С. 3.

* * *

Алексин, В. Идею окрыляют, возможности приземляют / В. Алексин // Совет. Чувашия. – 1997. – 10 июня.

Жиркевич, А. Встречи с И. Я. Яковлевым / А. Жиркевич // Лик Чувашии. – 1995. – № 2. – С. 122-164; № 3. – С. 148-159; № 4. – С. 93-108; № 5-6. – С. 202-223; 1996. – № 1-2. – С. 148-183.

Капитонова, И. Дорого каждое слово : [о значении трудов И. Я. Яковлева] / И. Капитонова // Совет. Чувашия. – 2005. – 23 апр. – С. 2

Матвеева, Г. В вечной памяти народов Поволжья : [об открытии в г. Ульяновск памятника великому просветителю чуваш. народа И. Я. Яковлеву] / Г. Матвеева; фот. В. Романов // Совет. Чувашия. – 2006. – 3 окт.

Петров, Н. П. Новая чувашская письменность / Н. П. Петров // Календарь года = Çулталăк кĕнеки : 2001. – Чебоксары, – 2000. – С. 163-169.

Савин, С. М. Духовное наследие И. Я. Яковлева в контексте современного образования / С. М. Савин // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2006. – № 4-5. – С. 42.

Федотов, М. И. Я. Яковлев у Государя Николая II / М. И. Федотов // Совет.Чувашия. – 1997. – 3 окт.

Чернова, Н. Н. Из истории обучения чувашскому языку / Н. Н. Чернова // Вестник Чувашского республиканского института образования. – Чебоксары, 2002. – Вып. II. – С. 140-145. – Библиогр.: 6 назв.

**И. Я. Яковлева халалласа çырнă произведенисем**

[«Пĕрчĕн-пĕрчĕн савнă таврана…»] // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 1997. – № 5 – 6. – С. 100. – Авт. кăтартман.

Алка, А. И. Я. Яковлев // Алка, А Сăввăмçăм сăввăм : сăвăсем / А. Алка. – Шупашкар, 1976. – II том. – С. 25-26.

Алка, А. Ту айĕнче ларать мухтавлă Кушкă / А. Алка // Тăван Атăл. – 1996. – № 4. – Хупл. 1 с.

Аслут, А. Яковлев палăкĕ умĕнче / А. Аслут // Хыпар. – 1997. – 12 авăн.

Воробьев, А. Сĕве хĕрринчи çурт : поэма / А. Воробъев // Тăван Атăл. – 1970. – № 12. – С. 1-3.

Давыдов-Анатри, В. Яковлева сума суса // Давыдов-Анатри, В. Сăвăсем / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1986. – С. 95.

Тихăн Петĕркки. Кушкă ачи : повесть / Тихăн Петĕркки. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992. – 398 с

Хусанкай, П. П. Тăпра / П. П. Хусанкай // Хыпар. – 1996. – 3 çурла.

Юхма, М. Термен : роман / М. Юхма. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990. – 464 с.

Хатĕрленĕ Т. Фадеева



1901 çулта хĕрарăм педагогика курсĕ, 1907 çулта икĕ праслă хĕрарăм училищи уçăлать. 1912 çулта икĕ класлă училищăран виçĕ çуллăх курс туса хураççĕ. 1918 çулта вĕсен вырăнне хĕрарăмсен учитель семинарийĕ пуçланса каять. Хĕрарăм – учительсем хатĕрлемелли программа тунă чух И. Я. Яковлев практикăлла дисциплинăсене пысăк вырăна хунă. Сăмахран, училищĕри хĕрачасене апат-çимĕç пĕçерме, алса – чăлха çыхма, кĕпе – йĕм çĕлеме вĕрентнĕ, юрлама, сĕрме купăс калама хăнăхтарнă. Унсăр пуçне вĕсем арçын ачасемпе танах шкулăн ял хуçалăх ферминче ĕçленĕ. Училишĕре арифметика, тăван чĕлхе, вырăс тата чиркӳ – славян чĕлхисем, геометри, çутçанталăк, педагогика. логика, пуçламăш шкулта вĕрентмелли предметсен методикие вĕрентнĕ. Училище 1917 çулчен 400 хĕрарăм – учитель вĕрентсе кăларнă.

И. Я. Яковлев чухăн çын ачисене вĕренме епле пулăшнине А. Васильева учительнница асаилĕве питĕ аван кăтартса парать.

– Эпĕ питĕ чухăн çемьере çуралса ӳснĕ. Хура пӳрт. Ĕне – качака пулман. Тумтир, кĕпе-йĕм çĕтĕк-çатăк. Эпир сакăр ачаччĕ... Ял тăрăх килрен киле кĕрсе, макăрса, çимелли ыйтса эпĕ нумай çӳренĕ.

<..> Ялти учитель мана ирĕксĕрех шкула сĕтĕрсе кĕчĕ. Шкул пурнăçĕ мана кăмăла кайрĕ, эпĕ лайăх вĕренекен пултăм. Вĕренсе тухнă çул пирĕн шкула экзамена И. Я. Яковлев пырса çитрĕ. Сывпуллашнă чух вăл, ман çине кăтартса: «Çак хĕрачана кĕркунне Чĕмпĕр шкулне вĕренме илсе пыр», – терĕ учителе.

<...> Чĕмпĕрте эпĕ çичĕ çул (1897–1904ç.ç.) вĕрентĕм. Чĕмпĕр шкулĕ мана верентрĕ, тăрантарчĕ, тумлантарчĕ. Вĕреннĕшĕн земски управо, учителе тухсан, шалуран пĕтĕм расхута тытса пымалла, тӳллесе тăнă. Çак йывăрлăхран каллех Иван Яковлевич тăрăшнипе хăтăлтăм. Çĕрпӳ уездĕнчи шкулсенче вырăнсем учительсемпе тулса çитиччен вăл мана хăй патĕнче пĕр уйăх тăрантарса усрарĕ. Кайран тин Козьмодемьянск уездне, вырăн тупса, учителе ячĕ. Лавçа вăл мана шкула çитичченех ăсатса яма хушрĕ. Акă мĕнле тăрăшнă вал чухăн çын ачисемшĕн!»

– И. Я. Яковлев чăвашсен илемлĕ литературине пуçарса яраканĕ пулнă. Ку ĕçе вăл халăх пултарулăхне илемлетсе йĕркеленинчен пуçланă.

Хĕл иртнĕ, çитнĕ тепĕр çур та.
Вĕçленнĕ çу, пуçланнă кĕр.
Çаплах вăл пулнă ырă çутă
Вăрри акса çÿрекенскер.

Вăл тутă ылтăн вăрлăх акнă.
Кайран вăл пулнă çул çинче
Çĕкленнĕ шкул хура куракла.
Хура мăрьеллĕ ялсенче.

Хăй чунĕ – варĕпе юратнă
Хăйне юратнă халăха,
Анчах мундирĕпе хăратнă
Вăл пĕтĕм тĕрĕсмарлăха...
*Я. Ухсай «Чĕмпĕр»*

– Нумай вăхăт хушши ырми-канми ĕçленĕ хыççăн И. Я. Яковлев 1871 çулта чăваш алфавитне туса хунă чăвашсен çĕнĕ алфавичĕпе усă курса, ачасене вĕрентме букварь пичетлесе кăларнă. Алфавит тăвас ĕçре И. Я. Яковлев университечĕн студенчĕ-филолог В. А. Белилин, вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарийĕн студенчĕ Д. Ф. Филимонов пулăшаççĕ. Кам-ха вăл Данил Филимонович Филимонов? Вăл 1855 çулта Çĕрпӳ уесĕнчи Чурачăк вулăсĕнчи Чиркӳллĕ Ямаш ялĕнче çуралнă. Малтан Чурачăкри земство шкулĕнче, унтан Хапăс шкулĕнче вĕреннĕ. Шкултан вĕренсе тухсан Хусанти вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарие вĕренме кĕрет. Семинарирен вĕренсе тухсан ăна Иван Яковлевич Чĕмпĕрти чăваш шкулне ĕçлеме ярать. Кунта вăл шкул заведующинче ĕçлет, ачасене историпе географи вĕрентет. Çав вăхăтрах букварьсем хатĕрлес, шкулта вĕренмелли кĕнекесемпе пособисем кăларас ĕçе хутшăнать.

– Хĕрарăмсене çутта кăларнин обществăлла пĕлтерĕшĕ мĕн тери пысăккине Иван Яковлевич лайăх ăнланнă. Çавăнпа вăл 1878 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнче хĕрарăмсен училищине уçать. Çутĕç министерстви училищăна официаллă йĕркепе йышăниччен виçĕ çул хушши Иван Яковлевич хăйĕн укçи – тенкипе вĕрентсе пурăнать. Училище никĕсĕ çинче



## ЧĂВАШ ХАЛĂХНЕ ÇУТТА КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШНĔ ÇЫН

*(И. Я. Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитнĕ май уява иртternĕ чух усă курма)*

*«Юрататăп эп чăваш халăхне, вĕсене ырă тунисĕр пуçне мана урăх нимĕн те кирлĕ мар».*
И. Я. Яковлев

Зала илемлетнĕ. И. Я. Яковлев пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан кĕнеке выставки йĕркеленĕ. И. Я. Яковлев портретне çакса вырнаçтарнă. Стенасем çине И. Я. Яковлев çинчен каланă тата унăн сăмахĕсене вырнаçтарнă. Ф. Павлов илемлетнĕ «Хăрăктурат» юрă илтĕнет.

Ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче чăвашсен аслă педагогĕ Иван Яковлевич Яковлев çуралнăранпа 160 çул çитет. Юбилее тивĕçлĕ кĕтсе илес тесе Раççей тата Чăваш правительствисем ятарласа постановленисем йышăннă. Вĕсенче юбилее хатĕрленсе тĕрлĕ мероприятисем туса ирттерме палăртнă. Сире хаклă çыннăмăрсем, И. Я. Яковлевăн пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарас тетпĕр.

**1-мĕш е. п.:** Кăнна Кушки... Ăна туран куратăн:
Çырмаллă ял; ял вĕçĕнче çаран.
Тахçан кунта иккен тăлăх-туратăн,
Кĕтӳ кĕтсе, вăл ӳснĕ ачаран.

Ун чух чăвашăн пурнăçĕ, кунçулĕ
Хăй пӳрчĕсем пек пулнă-çке хура.
Юхтарнă халăх тарпала куççулĕ,
Пуççапнă ĕмĕр Пихампар турра.

<...>Ĕмĕтленни – çунни те иртнĕ кăлăх,
Çырса хумашкăн саспалли те çук...
Çакна йăлтах курса ăнланнă тăлăх,
Çĕрсем-хирсем виççе çӳренĕ чух.

<...>Сĕм чăтлăх витĕр çĕнтерсе тухасшăн
Вăл, парăнмасăр, утнă çутталла.
Ăна хавхалантарнă Ленин ашшĕ –
Ĕмĕтсемпе, ăспа, камăлпала.

*А. Алга «И. Я. Яковлев»*

**<u>2-мĕш е. п.:</u>** И. Я. Яковлев Чĕмпĕр кĕпĕрнинче Пăва уездне кĕрекен Кăнна Кушки ялĕнче çуралнă. Çуралсан виçĕ кунтанах унăн амăшĕ вилсе кайнă. Анчах ырă кăмăллă чăвашсем хăйсен ырă йăлипе ăна çемьене илсе хăйĕн ачисемпе танах пăхса ÿстернĕ.

Унăн ача чухнех çак çынсене ырă тăвас шухăш çуралнă. Çитĕннĕçемĕн ку шухăш тарăнланнă, мĕн виличчен те тухман.

Ача чухнех Иван Яковлевич питĕ ăслă пулнă. Пăрăнтăкри шкулта вĕреннĕ чухне вăл пĕлÿ тĕлĕшпе чи малти пулнă. Çавăнпа та ăна малалла вĕренме мишавайсен шкулне янă. Ку шкула лайăх пĕтерсе тухнă хыççăн И. Я. Яковлев кĕпĕрнесем тăрăх çĕр виçсе çÿренĕ. Тĕрлĕ халăхсем пурăнакан вырăнсенче çÿрени, тĕрлĕ халăхсен çыннисемпе калаçни, вĕсен йăлисемпе паллашни унăн тавракурăмне анлăлатнă.

– Халăха çутта кăларас тесен, унăн хăйĕн вĕреннĕ çын пулмалла. Çавăнпа Иван Яковлевич май пур таран куллен вĕренме тăрăшнă. Пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе вăл, вырăс çыннисем пулăшнипе, Чĕмпĕрти гимназие вĕренме кĕнĕ.

Чĕмпĕрти гимназире улттăмĕш класра вĕреннĕ чух вăл виçĕ чăваш ачине ялтан хăй патне чĕнсе илнĕ те вĕсене вĕрентме пуçланă. Ку ĕçре ăна ырă кăмăллă вырăс ачисем Панаевпа Соколов пулăшса пынă. Хăй туса хунă шкулăн малтанхи тапхăрне Иван Яковлевич «шкул – хваттер» тесе каланă. Шкул – хваттер чăн-чăн шкул пулса тăтăр тесе ăна И. Н. Ульянов тата Чĕмпĕр çыннисем сахал мар пулăшнă. И. Я. Яковлев чăваш халăхĕшĕн вăйне шеллемесĕр ĕçленĕ. Хăй каланă тăрăх, вăл пуçарса янă шкулăн никĕсне виçĕ тĕп идея хунă.

Пĕрремĕш – чăваш халăхне вырăс халăхĕпе туслаштарасси, чăваш халăхне вырăс культурипе паллаштарасси, унăн культурине вырăс халăх культурин шайне çитичченех хăпартасси.

Иккĕмĕш – кирек мĕнле чăваш та лайăх ăнланакан тăван чĕлхепе шкул вĕрентĕвĕнче усă курасси, çак тĕллеве пурнăçа кĕртес шутпа чăваш хресченĕсем хушшинчен тухнă, вĕсен кăмăлĕсене, йăлисене тата чĕлхине пĕлекен учительсем вĕрентсе хатĕрлесси.

Виççĕмĕш – чăваш халăхĕ хушшинче христианство тĕнне сарасси.

– Чĕмпĕр гимназине ылтăн медальпе пĕтернĕ хыççăн 1870 çулта И. Я. Яковлев Хусанти университета вĕренме кĕрет. Çав çулах вăл Николай Иванович Ильминскипе паллашать. Н. И. Ильминский пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Чăваш букварьне хатĕрленĕ чух Н. И. Ильминский тата унăн вĕренекенĕ – Хусан университечĕн студенчĕ В. А. Белилин – И. Я. Яковлева нумай пулăшнă. Николай Иванович пулăшнипех Иван Яковлевич Хусанта икĕ кăларăмпа чăваш словарьне кăларать. Вăл сĕннипе И. Я. Яковлева университетран вĕренсе тухсан Хусан вĕренÿ округĕн инспектор ĕçне туса пыма, каярахпа инспектора лартаççĕ.

Инспекторта ĕçлеме пуçласан И. Я. Яковлев шкула тĕреклетес, чăваш ялĕсенче çĕнĕ шкулсем уçас тĕлĕшпе учительсен педагогикăлла культурин шайне ÿстерес тесе вăйне шеллемесĕр ĕçлет.

– Вăл Прометей вутне хăй илнĕ,
Сĕм тĕттĕм халăх хушшинче
Ăна чĕртесшĕн хăйă чĕлнĕ
Тăван чăваш вăрманĕнче.

Утса пыман, вăрт – варттăн чупнă,
Шкул хыççăн шкул тата уçма
Хирсе хысна укçи те илнĕ,
Туяннă чын та çапăçма.

– Чăваш йăваш пек, мĕскĕн пек тăр, –
Темен нихçан та вăл хăйне.
Вăл пулнă пысăк çын, инспектор.
Сахал-и? Пилĕк кĕпĕрне!

Вăл пулнă чĕринче телейлĕ
Анчах çулталăк тăршĕпе
Çÿренине кам ырлăх тейĕ!
Пĕрре тусан, тепре йĕпе!